# *Аслă Çĕнтерÿ кунĕ ячĕпе саламлатпăр!*

чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

84 /26490/ № | Кĕçнерни кун, 2014, çу (май), 8 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru


## Саламлатăп

**Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин хаклă ветеранĕсем тата тыл ĕçченĕсем, хисеплĕ ентешĕмĕрсем!**

Сире аслă уяв – Çĕнтерÿ кунĕ – ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче пире тăнăçлăх тата ирĕклĕх парнеленĕ паттăрсене çуллен чыслатпăр, çапăçу хирĕсенче пуç хунисене асăнатпăр. Çĕнĕ ăрусем паттăрсен умĕнче ĕмĕр-ĕмĕр парăмра, вĕсем пархатарлă ачисемпе мăнукĕсен чĕринче яланлăхах юлĕç!

Пирĕн ентешсем фашизма тĕп тăвассине пысăк тÿпе хывнă. Чăваш Енĕн 210 пин ывăлĕпе хĕрĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин фрончĕсенче тăшманпа харсăррăн тата паттăррăн кĕрешнĕ.

Тылра хĕрарăмсем, ватăсем, ачасем ырми-канми ĕçленĕ. Чăваш Енĕн ĕçчен те ырă кăмăллă халăхĕ мĕн пуррине пĕтĕмпех Аслă Çĕнтерÿ валли панă. Хуласемпе ялсенче эвакуациленĕ предприятисем вырнаçнă, госпитальсем аманнисене йышăннă. Оккупациленĕ территорисенчен тарма тивнĕ 70 пин ытла çынна пирĕн республика тараватăн йышăннă, пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтернĕ.

Пирĕн ветерансем – хăйне евĕрлĕ çынсем. Хăрушă тăшмана çĕнтернĕ хыççăн вĕсем мирлĕ вăхăтра паттăр тепĕр ĕç тунă – кĕске тапхăртах çĕр-шыва ишĕлчĕкрен çĕкленĕ.

Шел, вĕсен йышĕ çуллен чакса пырать. Паян республикăра – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин 2 пине яхăн инваличĕ тата ветеранĕ, 25 пин тыл ĕçченĕ, çĕнтерÿçĕ-салтаксен тăлăх 6 пин мăшăрĕ. Патшалăхăн тата обществăн вĕсем тĕлĕшпе яланах тимлĕ пулмалла.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисене тата республикăра пурăнакан мĕн пур çынна çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей, мир тата ырă сунатăп! Уяв ячĕпе! Çĕнтерÿ кунĕ ячĕпе!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**Михаил ИГНАТЬЕВ.**

# Мирлĕ пурнăçшăн пуç хунă кашни салтак – ПАТТĂР!



2013, çу, 9. Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕ

***Этемлĕх историйĕнчи чи юнлă вăрçăн хаяр çулĕсенче кăтартнă паттăрлăхăн иксĕлми çути вун-вун çул иртсен те пирĕн пата çитет. Çухатусен ыратăвне тÿссе, мĕн пур вăя пухса, хăйсене хĕрхенмесĕр Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин паттăрĕсем пурăнмалли ирĕке упраса хăварнă. Çар çыннисем тата тыл ĕçченĕсем пĕрле кар тăрса Çĕнтерĕвĕн вăрах кĕтнĕ кунне çывхартнă.***

Чăваш Ен халăхĕ XX ĕмĕр мурне çĕнтерес ĕçе сăмахпа хаклама çук пысăк тÿпе хывнă. Унăн мухтавлă 208 пин ытла ывăлĕпе хĕрĕ фронта кайнă, тăшманпа кĕрешсе паттăрлăх кăтартнă, ĕмĕрлĕх чыс çĕнсе илнĕ.

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕ – пĕтĕм халăх мăнаçлăхĕпе пĕтĕм халăх ас тăвăмĕн кунĕ, Раççей халăхĕн иксĕлми паттăрлăхĕпе чун çирĕплĕхĕн, ĕненĕвĕпе чăтăмлăхĕн символĕ. Нимĕнле вăхăт сĕмĕ те хуплаймĕ ăна, сÿнтереймĕ Аслă Çĕнтерÿ çутине.

**Алексей АГЕЕВ, ĕçпе вăрçă ветеранĕ /Йĕпреç районĕнчи Энтриел ял тăрăхĕн хисеплĕ çынни/:**

– Иртнĕ уйăх вĕçĕнче эпĕ тăхăр вуннă тултартăм. Юбилей ячĕпе мана Раççей Президенчĕ Владимир Путин саламлани кăмăл-туйăма çĕклентерчĕ, çĕр-шыв ертÿçи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Аслă Çĕнтерĕве çывхартма тивĕçлĕ тÿпе хывнă ветерана нумай-нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунни вăй-хал хушрĕ.

Çапла, пирĕн ÿсĕмри яшсен çамрăклăхĕ вăрçăра иртрĕ. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă-тухманах мана та алла пăшал тытма тиврĕ. Атăл хĕрринчен Эльба таран утса тухрăм, вилĕмпе пурнăç хушшинче пынă çапăçусенче пиçĕхрĕм. Тăшмана пĕрле аркатнă нумай-нумай юлташăма ĕмĕрлĕхех çухатса хăвартăм. 1941-1945 çулсенчи хаяр та юнлă вăрçă Совет Союзĕшĕн калама çук пысăк çухатусемпе çыхăнчĕ. Паянхи куна çитсе те Çĕнтерÿ хакĕ мĕнле тăкаксенчен тăнине тĕрĕс палăртакан статистика кăтартăвĕсем çук.

Ним ÿстермесĕрех çапла калама тивĕçĕм пур: шывра та путман, вутра та çунман совет салтакĕ тĕнчене фашизм мăшкăлĕнчен хăтарса хăварчĕ. Анчах та океан леш енчи мул хуçисем кунпа килĕшесшĕн мар. Америка вăрçа хутшăнман пулсан нумай нациллĕ Совет Союзĕ Берлина парăнтарма хăват çитерееc çукки çинчен пĕр именмесĕрех халĕ палкаççĕ. Анчах историе, уйрăмах юнлă вăрçă страницисене ултавпа суяран тăракан тĕслĕхсем кĕртсе улăштарма май килместех. Чăнлăхпа тĕрĕслĕхе хура тĕспе сăрлама май çук.

**Виталий ДМИТРИЕВ, педагог /Канаш районĕ, Çĕнĕ Шуртан ялĕ/:**

– Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан 80 киллĕ тăван Шуртан ялĕнчен 50 çын фронта тухса кайнă, вĕсенчен çурри ытла çапăçу хирĕнче выртса юлнă. Çапла вара пĕчĕк кăна ял та Çĕнтерÿ кунне çывхартма пысăк тÿпе хывнă.

Паян Çĕнĕ Шуртанта сывă пурăнакан пĕр фронтовик та çук. Юлашки ветерана, Николай Васильевич Васильев гвардееца, икĕ çул каялла юлашки çула ăсатрăмăр.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пире кÿнĕ сурансем ытла та тарăн пулчĕç. Тăванлăхпа туслăх туйăмне мала хунă çĕр-шывăн маттур кăйкăрĕсем, вăрçă вут-çулăмĕнче мул-пуянлăх шыракан господасем мар, тÿпери хĕвеле хура пĕлĕтсемпе хупланма памарĕç. Эпир Çĕнтерÿ кунĕнче вилĕмсĕр паттăрсене чысласа лартнă палăк умне чечексем хуратпăр.

**Роза ВОЛКОВА, педагогика ветеранĕ /Вăрнар районĕнчи Нурăс сали/:**

– Çĕнтерÿ кунĕ – Раççейĕн кашни çыннишĕн çывăх та тăван, сăваплă тĕп уяв. Çулсем иртнĕ май та пирĕн халăх кăтартнă паттăрлăх сумĕ чакмасть, чапĕ сÿнмест. Пуç хунă, сусăрланса юлнă пин-пин çынна, арканнă хуласене тата çунтарса янă ялсене эпир манăçа кăлармăпăр. Фронтовиксен паттăрлăхне юнлă-çулăмлă çулсем хыççăн çут тĕнчене килнĕ ăрусем пархатарлăн упранă та, упратпăр та. Малашне те çапла пуласси нимĕн чухлĕ те иккĕлентермест. Çакăн пек çĕнтерÿ еткерçи пуласси – пысăк чыс, яваплăх.

Юлашки çулсенче историри пулăмсене урăхлатса, пулманнине пулнă пек кăтартма тăрăшакан йышланма пуçларĕ. Пирĕн çĕр-шыв хăвачĕ, сумĕ ÿссе пыни питĕ вĕчĕрхентерет пулас океан леш енчи «туссене». Тата хамăр çĕр-шыври хăш-пĕр сĕмсĕрккене. Вĕсем шухăшланă тăрăх – нимĕç фашисчĕсене тĕппипех çапса аркатнинче такамăн та тÿпи пур имĕш. Совет Союзĕнчи пĕрлĕхлĕ халăхсем хăйсене шеллемесĕр çапăçнисĕр пуçне. Çав этемккесен тĕллевĕ паллă. Анчах вĕсем çапла пуласса шухăшласа пурăнни айванлăх мар-ши? Çавна ăнланма тахçанах вăхăт. Хамăртан мăшкăлласа кулма, пирĕн халăхсен хушшине савăл çапма, туслăха аркатма памăпăр. Иккĕмĕш тĕнче вăрçин фрончĕсенче пуç хунă паттăрсен вилĕмсĕрлĕхĕ çапла тума хистет.

Меллĕ самантпа усă курса чаплă çак уяв кунĕнче пурне те сывлăх, ырлăх, телей тата юрату сунатăп. Пурнăçăр мирлĕ те телейлĕ пултăр.

**Ольга АРТЕМЬЕВА, Чăваш наци радио ĕçченĕ:**

– 1945 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕ историре яланлăхах пирĕн Тăван çĕр-шывăн хăвачĕпе мăнаçĕн, ăна хÿтĕлекенсен, тĕнчене фашизм тыткăнĕнчен хăтарнă паттăрсен чаплă çĕнтерĕвĕ пек çырăнса юлать. Пирĕн çакна яланах, ĕмĕр-ĕмĕр асра тытмалла. Вăрçăн малтанхи кунĕсенче-уйăхĕсенче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса юн тăкнă, Брест крепоçне, Мускавпа Сталинграда, Ленинграда хÿтĕленĕ çĕрте, Курск пĕккинче, Хĕвел тухăç Европăри çĕр-шывсене ирĕке кăларнă, Берлина илнĕ чухне хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă паттăрсемпе пĕрлех ятсăр паттăрсем те сум-хисепсĕр ан юлччăр тесе тăрăшмалла. «Паттăрлăх Тăван çĕр-шыва хÿтĕлесси çеç мар, ăна хÿтĕлекенсене асра тытасси, чысласси те» ăнлав паянхи, ыранхи тата килес ăрусен пурнăç тĕллевĕ пултăр. Мĕншĕн тесен çĕр çинчи мирлĕ пурнăçшăн пуç хунă кашни салтак – ПАТТĂР.

**Г.КУЗНЕЦОВ, Ю.СТЕПАНОВ ыйтса пĕлнĕ**

→ 2 стр.

## Чăваш Ен Пуçлăхне саламлань

Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева Çĕнтерÿ кунĕпе Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин саламланă. "Хĕрĕх пиллĕкмĕшĕнчи çĕнтерÿллĕ çуркунне историе ĕмĕрлĕхех çырăнса юлнă. Пирĕн халăхăн пысăк паттăрлăхĕ вара çулсем иртнĕçемĕн те манăçмасть. Çак ас тăвăм ăруран ăрăва куçса пырать, кирек мĕнле тĕрĕслеве те чăтса ирттерме пулăшать, çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать. Сире ĕçĕрсенче çитĕнÿсем тата пĕтĕм ыррине сунатăп", – тенĕ саламра.

Михаил Игнатьев ячĕпе çавăн пекех федераци субъекчĕсен, федераци тата республика министерстви-ведомстви ертÿçисенчен, республикăн район-хулин пуçлăхĕсенчен тата Чăваш Енре пурăнакансенчен саламсем килеççĕ.


### Уяв ячĕпе!

ЕДИНАЯ РОССИЯ

**Хаклă ентешĕмĕрсем!**
**Чăваш Республикин хисеплĕ çыннисем!**

Сире Çĕнтерÿ кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатпăр!

Аслă çак уяв – сÿнми мухтав, çĕр-шывăмăрăн килес ăрăвĕсемшĕн тунă паттăрлăхăн, ĕçри харсăрлăхăн символĕ.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисене, тыл ĕçченĕсене, питех те хаяр тĕрĕслев çулĕсенче çĕр-шывăмăр ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварнăскерсене, тайма пуç!

Сире çирĕп сывлăх, ырлăх, телей, тăнăçлăх тата ырă сунатпăр!

**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» партин Чăваш регион уйрăмĕ.**

### Саламлатпăр

**Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин хаклă ветеранĕсем, тыл ĕçченĕсем!**
**Республикăн хисеплĕ çыннисем!**

КОНДИТЕРСКАЯ ФАБРИКА АККОНД ОСНОВАНА В 1943 ГОДУ

Аслă Çĕнтерÿ кунĕ ячĕпе чĕререн тухакан ăшă салам йышăнсамăр!

Ку вăл çутă хурлăх уявĕ, çĕнтерÿшĕн пĕтĕм кăмăлтан савăннине палăртакан уяв. Çĕнтерĕвĕн мăнаçлă кунĕ хăрушă çав вăхăтра çынсене мĕн тÿссе ирттерме тивнине яланах аса илтерсе тăрĕ. Тăван çĕр-шыва çăлассишĕн çапăçусенче вилĕме хирĕç утнисене, тылра хăйсен паттăрла ĕçĕпе Çĕнтерĕве çывхартнисене, çĕр-шыва ишĕлчĕкрен çĕкленисене эпир асра тытатпăр.

Хаклă ентешĕмĕрсем! Сире тата сирĕн çывăх çыннăрсене чи кирлине – çирĕп сывлăх, ăнăçу, мирлĕ тÿпе айĕнче ыранхи куна шанса пурăнма сунатпăр. Сирĕн чĕресенче яланах ĕненÿ, шанчăк тата юрату пулччăр.

Çĕнтерÿ уявĕпе!

**Хисеплесе, предприяти коллективĕ ячĕпе – «АККОНД» АУОн генеральнăй директорĕ Валерий ИВАНОВ.**


## Тав тунă

***Чăваш Ен Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн ячĕпе Ветерансен пĕрлешĕвĕсен ĕçне йĕркелекен комитет председателĕнчен, Пĕтĕм Раççейри «Çар тăванлăхĕ» организаци председателĕнчен, Патшалăх Думин депутатĕнчен, Совет Союзĕн Геройĕнчен Борис Громовран тав çырăвĕ килнĕ.***

«Совет Çарĕн чаçĕсене Афганистанран илсе тухнăранпа 25 çул çитнине паллă тăвассине хатĕрленме пысăк пулăшу кÿнĕшĕн, ветерансен организацийĕсене пулăшса пынăшăн, вăрçă тата çар службин ветеранĕсемпе инваличĕсен, вĕсен тата вилнĕ салтаксен çемйисен пурнăçне лайăхлатмалли, Тăван çĕр-шыв хÿтĕлевçисене асра тытмалли тата çамрăксене патриотла воспитани памалли сĕнÿсене пурнăçланăшăн тав тăватăп», – тенĕ çырура.

Унсăр пуçне Пĕтĕм Раççейри çамрăксен «Раççейĕн Олимп пуласлăхĕ» спортпа вĕренÿ форумĕн йĕркелÿ комитечĕ Чăваш Ен Пуçлăхне çамрăксен Олимп вĕренĕвне аталантарас ĕçе пысăк тÿпе хывнăшăн, асăннă форума хатĕрленсе ирттерме хастар хутшăннăшăн Тав çырăвĕпе наградăланă.

Михаил Игнатьева çавăн пекех Раççейĕн регионсен аталанăвĕн министрĕ Игорь Слюняев та тав тунă. Вăл республика пуш уйăхĕн 11-14-мĕшĕсенче Канны хулинче иртнĕ 25-мĕш «МИПИМ» инвестици куравне хастар хутшăннине палăртнă.

«Сирĕн регион тăратнă проектсем, çав шутра «Этнос Чăваш Енĕ» туризмпа рекреаци кластерне туни, Шупашкар заливĕнчи фонтансен ушкăнĕн строительстви, «Садовый» микрорайон проекчĕ, Шупашкар 500 çул тултарнине халалланă парк концепцийĕ курава хутшăннисене, тĕнче шайĕнчи нумай эксперта чăннипех кăсăклантарчĕç, çакă Шупашкар хулине никĕсленĕренпе – 550, Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине уявлас умĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ», – тенĕ çырура министр.

**М.АНДРЕЕВ.**

## Çамрăк ăру валли – «Чăматанри музей»

***Вăрнарти историпе тавра пĕлÿ музейĕнче Çĕнтерÿ кунне халалласа «Чăматанри музей» акци йĕркеленĕ. Ăна шкул çулне çитмен ачасемпе ирттереççĕ.***

Музей директорĕ Елена Шарипова поселокри 5-мĕш ача садĕнче пулнă. Пушă алăпа мар, салтак чăматанĕпе. Асăннă экспоната аваллăх управçине 85 çулти Ольга Чернова парнеленĕ. Çак чăматанпа унăн тăванĕ çапăçу хирĕнчен таврăннă. Унта историпе çыхăннă экспонатсем: Отар ялĕнчи Алексей Федоров танкистăн (вăл Берлина çитнĕ) медальпе пуян кителĕ. Ăна Алексей Сидорович хăй пурăннă чухнех музее парнеленĕ. Чăматанри салтак каски çинче те вăрçă йĕрĕсем: ăна пульăсем шăтарнă. Чăматанра çавăн пекех – Совет Союзĕн Геройĕн Анатолий Ивановăн пилотки.

Елена Шарипова çамрăк ăрăва кашни экспонат çинчен тĕплĕн каласа панă, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пирки документсемпе усă курса хатĕрленĕ фильм кăтартнă. Ачасем Брест крепоçĕн хÿтĕлевçисем, Сталинград патĕнчи çапăçусем, Ленинград унки, рейхстага илни çинчен интересленсех итленĕ. Виçĕм кун вара «Чăматанри музей» поселокри 3-мĕш садике çитнĕ. Паян вара унпа 1-мĕш ача садне çÿрекенсем паллашĕç.

**Р.ВАСИЛЬЕВА.**

## Паллашăр: «Асанне арчи»

***Культура çулталăкне халалласа Патăрьелти тĕп вулавăшра «Асанне арчинчен» пĕчĕк музей йĕркеленĕ. Вăл вулакансене чăваш халăхĕн пурнăçĕпе, йăли-йĕркипе, культурипе паллаштарать.***

Экспозицире – тĕрлесе капăрлатнă чăваш кĕписем, саппунĕсем, тутăрĕсем, пит шăллисем, сĕтел çиттисем, вырăн таврашĕсем. Вулав залĕнче вара чăваш хĕрĕсен çи-пуçĕпе – кĕпипе, тухйипе, теветпе, мăй çыххипе – паллашма пулать. Асанне арчи вара калама çук пуян. Кунта килте тĕртнĕ урай çитти те, масмак та, сурпан та, сарă та, тĕрленĕ вырăн тавраше те, çăпата та, çыхнă нуски те пур. Пĕчĕк музее алă ăстисем тĕртнĕ кавирсем те пуянлатаççĕ. Выставка валли материалсене вулавăш ĕçченĕсем тата «Радость» клуб членĕ Лидия Ижедерова тăратнă. Килте тĕртнĕ кашни чăваш кĕпи тĕсĕпе, тĕррирешĕпе уйрăлса тăрать. Библиотекарьсем хăйсем те чăваш тумне тăхăнса экскурси куллен ирттереççĕ.

**А.ГРОМОВА.**

### Пирĕн хаклă ветерансем!

Сире тата сирĕн çемйĕрсене хамăрăн тĕп наци уявĕ – Çĕнтерÿ кунĕ – ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Çу уйăхĕн 9-мĕшĕ кашни çемьешĕн ахаль кун мар, чăн-чăн уяв. Шăпах ветерансен паттăр ăрăвĕ хăйсен харсăрлăхĕпе тата çирĕплĕхĕпе пире ирĕклĕ çĕр-шывăн мирлĕ тÿпине парнеленĕ.

Хисеплĕ ветерансем, тыл ĕçченĕсем! Эсир пирĕншĕн – кăмăл çирĕплĕхĕн, паттăрлăхăн тата Тăван çĕр-шыва юратнин тĕслĕхĕ. Уяв ячĕпе, хаклă туссем! Çĕнтерÿ кунĕ ячĕпе!

**К.А.КАНДАСОВ,**
**РФ Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн Шупашкар хулинчи следстви пайĕн ертÿçи, юстици полковникĕ.**

### Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 12, çĕрле 8 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 761 мм, сывлăшри нÿрĕк 53 процент.

**Кун тăршшĕ 15 сехет те 53 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 18, çĕрле 6 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 760 мм, сывлăшри нÿрĕк 50 процент.

**Кун тăршшĕ 15 сехет те 57 минут.**


**Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче**
***«Хыпара»* 744 тенкĕ те 12 пуспа,**
***«Хыпар-шăмат куна»* 321 тенкĕ те 96 пуспа çырăнтараççĕ**

*Канашлу*

# Çурт тумалли вырăн хакланать. Мĕншĕн?



cap.ru сăн ӳкерчĕкĕ

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ытлари кун Шупашкарта пĕлтĕрхи çурла уйăхĕнче тума пуçланă ача сачĕн строительствипе кăсăкланчĕ. Ăна Правительство çуртне хирĕç, тĕп хула варринчи кӳлмек тӳпемĕнче, темиçе тĕслĕ кирпĕчрен хăпартнă. Шупашкар администрацийĕ тата "Градострой" пĕр-пĕрин хушшинче çирĕплетнĕ контрактпа ăна çак уйăх вĕçĕнче туса пĕтерме пăхнă.

Объекта маларах çитнĕ журналистсем пăхрĕç те ĕç калăпăшĕ пысăккине асăрхарĕç. Республика кунĕ умĕн те хута яраймасси уçăмланчĕ. М.Игнатьев строительство пахалăхне тишкернĕ хушăра садике кăçалхи çурла уйăхĕнче, Шупашкар кунĕ умĕн, уçасси пирки сăмах хускатрĕ. Подряд организацийĕн ертӳçи А.Шумков ĕçе кĕркуннеччен вĕçлеме шантарчĕ.

Республика Пуçлăхĕ хĕвел анăç районĕнчи "Университетский-2" микрорайонта пурăнмалли çурт тăвассине еплерех йĕркеленипе те паллашрĕ. "ТУС" общество унта, Завражнăй салипе юнашар, кăçалхи тăваттăмĕш кварталта 457 хваттерлĕ 10-16 хутлă çурт туса пĕтересшĕн. "Çемьесем килес çул пуçламăшĕнче пурăнма кĕрĕç, – терĕ Н.Угаслов генеральнăй директор. – Кашни хваттере хутса ăшăтмалли хатĕр вырнаçтаратпăр. Пӳлĕмсенчи сывлăш температурине çемье палăртĕ. Кашни тăваткал метра 45 пин тенкĕлле сутăпăр".

Республика Пуçлăхĕ объектсене пăхса çаврăннă хыççăн Правительство çуртĕнче район-хула администрацийĕсен, çурт-йĕр тăвакан организацисен ертӳçисемпе канашлу ирттерчĕ. Строительсем кăçалхи пĕрремĕш кварталта умри тĕллеве ăнăçлă пурнăçланине хак парса ырларĕ. Строительство ĕçĕсен калăпăшĕ, вăл шутра пурăнмалли вырăн тăвасси, пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен 9,1% ӳснĕ. "Çапах хăвăра Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри ача садне вăхăтра хута ярайман подряд организацийĕ пек ан кăтартăр, – терĕ М.Игнатьев. – Вăл ĕçе вĕçлеймесĕр хăйĕн ятне ячĕ. Кăçал строительсем сăмаха çирĕп тытасса шанатăп".

Çурт-йĕр тăвакансен строительство пуçлама ирĕк паракан мĕн пур документа алла илнĕ чух тĕрлĕ организаципе хутшăнса 19 ыйтăва татса памалла. Республика Пуçлăхĕ çак хисепе пĕчĕклетес тĕллевпе вĕсене тепĕр хут тишкерсе хак пама ыйтрĕ.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ-строительство, архитектура, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Олег Марков строительсен пĕрремĕш кварталти ĕç-хĕлне тишкерчĕ. Пурăнмалли çурт пурĕ – 3,6%, Шупашкарта, Вăрмар, Канаш, Шупашкар районĕсенче нумайрах тунă. Çулталăкăн малтанхи виçĕ уйăхĕнче ăна тăвассине çемье тупăшĕпе перекетлĕ усă куракансем валли те лайăх йĕркеленĕ. Информацин пĕрлехи ресурсĕнче çурт никĕсне яма хатĕр 134 лаптăкпа паллаштарнă. Ĕç пуçламалла кăна. "Кăçал республикăн пурăнмалли вырăн хута ямалли тĕллевне пурнăçлама май çителĕклĕ", – пĕтĕмлетрĕ министр.

Ишĕлес патне çитнĕ 264 çуртран çĕнĕ хваттерсене 2013-2017 çулсенче 3883 çынна куçармалла. Программăн пĕрремĕш тапхăрĕ мĕнле пурнăçланать-ха? Халĕччен пурăнмалли 202 вырăнтан 508 çын çĕнĕ хваттерсене куçнă. Кăçал 3233 çын ыйтăвне тивĕçтерме тĕллев лартнă. Министр йывăр урапана малалла шутарма чăрмантаракан тумхахсене те асăнчĕ.

Пурăнмалли вырăн кашни уйăхра тенĕ пекех хакланать. Администрацисен йӳнĕрех сутакана суйласа илес тĕллевпе темиçе аукцион ирттерме тивет. Сăмахран, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенче виçĕ хутчен йĕркеленĕ. Сутакансем йӳнĕлле парасшăн мар. Муниципалитетсем пысăк хакпа килĕшмеççĕ. Çывăх вăхăтра Шупашкарта тăваттăмĕшне ирттерĕç.

Министр хваттер хакланнин пĕр сăлтавне республикăри риэлторсем пурăнмалли çуртсен 30% малтанах туянса 150-300 пин тенкĕ /3-6%/ хаклатса сутнипе ăнлантарчĕ. Чăваш Енре кăна – риэлторсен 60 яхăн организацийĕ, ку шутра – "Новый Дом, "Интерстрой", "Риэлтор", "Горизонт", "Дорисс-Риэлти". Хушма хакран налук тӳлес мар тесе чылайăшне налук органĕнче уйрăм çын ячĕпе шута илтернĕ.

Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ çулсенче пурăнмалли çурт сахалрах хута янă. Администраци пуçлăхĕ Александр Сироткин кăçал ĕçе лайăхлатас шанăç пуррине пĕлтерчĕ. Спутник хулара 13 пин çын хваттер илме черетре тăрать. Апла пулсан çитес çулсенче строительство валли çĕр лаптăкĕ чылай кирлĕ. Ăна хăш районтан касса илĕç? Хальлĕхе ыйту хуравне уçăмлатман-ха.

Тĕп хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков Шупашкарти пурăнмалли çурт картишĕсене çăмăл автомашинăсем тултарнăран вырăнти хăй тытăмлăх умне тухса тăнă çивĕч ыйтăва татса памалли çул-йĕрпе паллаштарчĕ. Транспорт лартмалли çĕнĕ вырăнсем тумасăр вĕсене пушатаймăн. Анчах автомашина харпăрлăхçисенчен нумайăшĕ кĕсьерен кĕмĕл кăларса автовырăн строительствине хутшăнасшăн мар. Подъезд умĕнчен ирхине транспорта хускатса ларса кайма питĕ меллĕ-çке. Йĕпесапара картишне лапăртанине, çынсене инкеке лектернине шута хумаççĕ. "Транспорт лартма юраман çĕре çăмăл машина тултарнăшăн хуракан штрафа пысăклатмасăр ыйтăва татса параймăпăр", – терĕ А.Ладыков.

Çĕмĕрле хула администрацийĕн пуçлăхĕ Любовь Дмитриева çынсене кивĕ тата ишĕлес патне çитнĕ çуртсенчен çĕнĕ хваттерсене куçарма тунă пурăнмалли вырăн пахалăхĕ тивĕçтерменнине, строительство пуçлама çĕр лаптăкĕ çуккине пĕлтерчĕ. Республика Пуçлăхĕ çак тата ытти ыйтăва татса пама хушрĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

*Спорт*

## Çурçĕр полюсĕ кăмăл-туйăма çирĕплетет

***Çапла каланă хăй вăхăтĕнче паллă çул çӳревçĕсем Матвей Шпаропа Борис Смолин. Унта пĕрре мар пулса курнă паттăрсем ертсе пынипе кăçалхи ака уйăхĕнче 16-18 çулсенчи çичĕ çамрăк Çурçĕр полюсне тепĕр хут çитсе килнĕ.***

РФ Спорт министерствипе «Приключение» клуб пуçарнă экспедици 2008 çултанпа иртет. Çĕр-шыври чи хăюллă та паттăр яшсемпе хĕрсем Çурçĕр полюсне кăçал 7-мĕш хут парăнтарнă. Ача-пăча прависене хӳтĕлекен РФ Президенчĕ çумĕнчи уполномоченнăй Павел Астахов сĕннипе экспедици йышне тăлăхсемпе ача çурчĕсен воспитанникĕсем тата коррекци шкулĕн вĕренекенĕсем кĕнĕ. Палăртмалла: вăл хăй те вĕсемпе пĕрле Çурçĕр полюсне çитсе килнĕ. Çамрăк полярниксем çул çӳреве Арктикăри «Барнео» станцирен пуçланă. 8 кунра вĕсем пур йывăрлăха çĕнтерсе /çил-тăманлă çанталăкра хысаксемпе тусем тăрăх, шыв-шур урлă каçма тивнĕ полярниксен/ 180 километра парăнтарнă.

Экспедицие пирĕн ентешсем те пĕрре мар хутшăннă. Ку енĕпе Çĕнĕ Шупашкарти «Кредо» туризм клубĕнче ăсталăха туптакансем палăрнă: Степан Шеверталов /Çурçĕр полюсне пĕрремĕш çитнисенчен пĕри/, Сергей Ломов /2009 çулта иртнĕ экспедици членĕ/, Анна Карпова /2010/, Сергей Кузнецов /2011/, Евгений Мартьянов /2012/. Кăçалхи экспедицие Çĕнĕ Шупашкар каччи, халĕ Мускаври ĕçлесе пурăнакан Владимир Родионов кайнă.

Ĕнер республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Кредо» туризм клубĕн хастарĕсемпе тĕл пулчĕ. «Çурçĕр полюсне чăтăмлисемпе вăйлисем кăна кайма пултараççĕ. Эсир – çавсен йышшинчен. Кашни çамрăкăн сирĕнтен тĕслĕх илмелле, сирĕн пек пулма тăрăшмалла. Тĕрĕссипе, туризм клубне çӳрекенĕн ӳтпĕвĕ те, шухăш-кăмăлĕ те çирĕпленет. Спорт туризмне аталантармашкăн малашне те хастаррăн ĕçлессе шанатăп», – терĕ Михаил Васильевич.

«Кредо» туризм клубĕн кунçулĕпе унăн ертӳçи Андрей Ширшов паллаштарчĕ. 1986 çулта Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕн А.Андриянов ячĕллĕ центрĕ çумĕнче йĕркеленнĕ клуб спорт туризмне аталантарас тата вĕренӳ-тĕпчев экспедицийĕсем ирттерес енĕпе ĕçлет. Хальхи вăхăтра унта 70 ытла çын ăсталăха туптать. «Пирĕн спортсменсем Чăваш Ен чемпионачĕсемпе кубокĕсенче, тĕрлĕ ăмăртура яланах малтисен ретĕнче. Спорт мастерĕсем Сергей Кузнецовпа Андрей Львов çĕр-шыв турнирĕсенче лайăх кăтартусемпе палăраççĕ. Клуб команди 10 çул хушшинче 30 ытла поход йĕркеленĕ. Кавказ, Алтай, Урал тăвĕсем çине, Саянăпа Хибинти хирĕсене темиçе хут çитсе курнă. 2010 çулта Андрей Львовпа Евгений Кормин Раççейри чи çӳллĕ вырăна – Эльбрус тăвĕ çине – хăпарнă», – пĕлтерчĕ вăл.

Тĕл пулура çавăн пекех ЧР физкультурăпа спорт, вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕсем Сергей Мельниковпа Владимир Иванов, ытти экспедицие хутшăннă Евгений Мартьяновпа Степан Шеверталов, Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕн центрĕн ĕçченĕ Мария Бовина та хăйсен шухăшĕсемпе паллаштарчĕç. Юлашкинчен республика Пуçлăхĕ «Кредо» туризм клубĕн хастарĕсене Тав çырăвĕпе тата сехетпе чысласа малашлăхра ăнăçу сунчĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

## Атратьсем акцие хутшăннă

***Улатăр районĕнчи Атрать ял тăрăхĕнче Ыр кăмăллăх эрни иртнĕ. Акци вăхăтĕнче ялта тĕрлĕ мероприяти йĕркеленĕ, унта вун-вун çын хутшăннă.***

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнчи уяв умĕн Атратьсем Çĕнтерӳ скверне тирпей-илем кĕртнĕ, йывăç-тĕм лартнă, хуралтăкартана çĕнетнĕ. Çавăн пекех шкул, ача сачĕн, масар территорийĕсене те илемлетнĕ, урамри çӳп-çапа пуçтарнă. Ятарлă акцирен пĕлӳ çурчĕн «Тимурсем» кружок хастарĕсем те айккинче юлман. Вĕсем ял тăрăхĕнчи ветерансемпе ватăсене чылай ĕç тума пулăшнă. Ыр кăмăллăх эрнинче ялти тĕслĕх библиотекăра пушар хăрушсăрлăхĕн тата экологи темисемпе «Çулăмсăр çуркунне – тĕтĕмсĕр çулла» калаçу, ырăлăх урокĕсем, «çавра сĕтелсем» иртнĕ. Акцин юлашки кунĕнче Атрате Канашран хăнасем килнĕ. Хулари модель агентствин пĕчĕк пикисем Троица чиркĕвĕнче тата ялти ытти паллă вырăнсенче пулса курнă, ал ĕç ăстисен куравĕпе паллашнă, Улатăрсене концертпа савăнтарнă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

*Аслă Çĕнтерӳ*

## Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçнă

***Чĕмпĕр облаçĕн патшалăх архивĕн ятарлă фондĕнче Совет Союзĕн Геройĕн Егор Терентьевич Воробьевăн докуменчĕсем упранаççĕ***

Е.Воробьев Чăнлă районĕнчи Вăта Тимĕрçен ялĕнче çуралса ӳснĕ. Шкул хыççăн Тельман ячĕллĕ колхозра ĕçленĕ. 1938 çулта ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ, Байкал леш енчи çар округне лекнĕ. 1939 çулта Халхин-Голшăн пынă çапăçусен вăхăтĕнче Егор Воробьев шофер танксемпе самолетсем валли сĕрмелли-çунтармалли хатĕрсем турттарнă. Ентеш Финлянди вăрçине те хутшăннă. 1941 çулта вăл тăван яла таврăннă, мирлĕ ĕçе кӳлĕннĕ. Трактор бригадине ертсе пынă. Авланнă, телейлĕ пурăнма ĕмĕтленнĕ. Анчах...

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă. Пĕр уйăхран Е.Воробьев каллех салтак атти тăхăннă. 1943 çулччен тĕрлĕ батальонра водительте службăра тăнă. Егор Терентьевичăн пысăк ĕмĕт пулнă – танк бригадине куçасшăн. Ăна пурнăçа кĕртме пулăшас тĕллевпе командир питĕ лайăх характеристика та панă. «...Дисциплинăна çирĕп пăхăнать, пуçланă ĕçе вĕçне çитерет, пуçаруллă, хушнисене тивĕçлĕ пурнăçланăшăн ăна сакăр хутчен хавхалантарнă» çырнă унта. Анчах арми политпайĕ унран танкист тăвас темен, рота парторгне лартнă.

Вăхăт сарăхтарнă хутсене уçнă майăн ентешĕн вăрçăри паттăр ĕçĕсем пĕрин хыççăн тепри куç умне тухаççĕ. ...1945 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче Стопница ялĕ /Польша/ çывăхĕнче фашист автоматчикĕсем рота çулне пӳлсе хунă. Е.Воробьев тăшман тылне пырса кĕрсе вут-çулăм сирпĕтекен гитлеровецсене тĕп тунă. Çакăн хыççăн рота пĕр çухатусăр малалла куçнă.

Буско-Язынская ялĕшĕн пынă çапăçура Егор атакăна пуринчен малтан çĕкленнĕ, ыттисене тăшман траншейисем енне ертсе кайнă. Пĕччен тăхăр фашиста вĕлернĕ, тăватă пулеметчика тыткăна илнĕ.

Нида станцийĕ çывăхĕнче тăшман вут-хĕм сапса совет салтакĕсене малалла кайма чарнă. Воробьевпа Гаврилюк пулеметчик йĕплĕ пралуксене татса тăшман енне тухнă, вилĕм сапакан хĕç-пăшала «çăварлăхланă». Рота атакăна çĕкленнĕ. Кĕске çапăçу хыççăн станцие ирĕке кăларнă.

Нимĕçсем совет танкĕсене хирĕç тăраймасăр Лаугвитц /Германи/ ялĕ патĕнчен чакма пуçланă. Егор Терентьевич икĕ автоматпа тата пулеметпа хĕçпăшалланса çула тухнă. Ентешпе пĕрле пулнă ушкăн пăрлă шыв урлă каçса тăшман умне пырса тухнă, çулне пӳлнĕ. Çавăн чухне Кваблюк рядовойпа иккĕшĕ 47 гитлеровеца тĕп тунă, тăватă «чĕлхе» тытнă.

1945 çулхи нарăсăн 10-мĕшĕнче Эрлебург ялĕ çывăхĕнчи çапăçура Е.Воробьев йывăр аманнă. Апла пулин те пăшалне алăран яман. Пулеметран персе тăрса фашистсен тапăнăвне чарса лартнă.



● *Е.Воробьев /сылтăмра/ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче.*

Пĕр уйăхра Егор Терентьевич 97 фашиста, тăшманăн ултă пулеметне тĕп тунă, тăхăр гитлеровеца тыткăна илнĕ. Аслă тĕп командующи Висларан пуçласа Одер таран пынă çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн Е.Воробьева темиçе хутчен те тав тунă. Ентеш Берлина илме те хутшăннă.

1945 çулхи çĕртмен 27-мĕшĕнче СССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Указĕпе Егор Воробьева Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă, «Ылтăн Çăлтăрпа» чысланă. 5-мĕш гварди армийĕн ветеранне çавăн пекех Ленин орденĕпе, «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн», «Халхин-Голшăн» медальсемпе, I степень Тăван çĕр-шыв вăрçин орденĕпе наградăланă.

Егор Терентьевич тăван яла 1946 çулхи нарăс уйăхĕнче таврăннă. «Память Куйбышева» колхоз председателĕн çумĕнче, ревизи комиссийĕн председателĕнче, строительство бригадин прорабĕнче, ампар хуçинче, шоферта, механикре ĕçленĕ. 1978 çулта тивĕçлĕ канăва тухнă. Апла пулин те алă усса ларман. Общество ĕçне хастар хутшăннă. Вăтам Тимĕрçенти ветерансен канашĕн тата Пĕтĕм Раççейри автомобилистсен пĕрлĕхĕн членĕ пулнă. Мăшăрĕпе икĕ ывăлпа тăватă хĕр пăхса ӳстернĕ.

Е.Воробьев 93 çула кайса 2011 çулхи кăрлачăн 23-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлнă. Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕнче çулсерен Пысăк Нагаткино ялĕнчи училищĕре ентеше халалласа ирĕклĕ кĕрешӳ енĕпе турнир йĕркелеççĕ.

■ **Андрей ЗАЙЦЕВ,**
**патшалăх архивĕн ĕçченĕ**

## Виç кĕтеслĕ çырусем

***Вăрçă пуçланнă чухне эпĕ тăватă уйăхра çеç пулнă, аттене, Степан Михайлович Василевские, фронта илсе кайнине те пĕлеймен. Каярахпа аппа ун патне çыру çырнине ас тăватăп.***

Пĕррехинче атте икĕ салтакпа пĕрле яла килсе кайрĕ. Вĕсем Хуракассинчи урапа-çуна тăвакан "Ширпотреб" артеле йĕлтĕрсем илме килнĕ. Пĕчĕк пулнă эпир, çапах вăрçă çулĕсем асăмрах юлнă. Пирĕнпе /аннен – тăватă ача/ пĕрле аттен шăллĕ Гена тата тăлăх хĕр ача Евок пурăнатчĕç. Аннене йышлă çак çемьене пăхса усрама çăмăлах пулман. Шкула кайичченех çурла тытса тырă выраттăмăр, пучах пуçтараттăмăр. Пӳрнене кастарнă йĕрсем паянхи кун та çав вăхăта аса илтереççĕ.

Вăрçă чарăнсан Çĕнтерĕве паллă тума çынсем ялти трибуна умне пуçтарăнчĕç. Çак куна хăшĕсем куççульпе, теприсем савăнса кĕтсе илчĕç. Атте 1945 çулхи юпа уйăхĕнче таврăнчĕ. Вăл киле кĕнĕ чухне эпир пиччепе иксĕмĕр çеçчĕ. Аслăраххисем аннепе пĕрле колхоза çĕр улми кăларма кайнăччĕ. Атте пӳрте кĕрсен пиччепе иксĕмĕре те çĕклесе юратрĕ, куççулĕ юхса анчĕ. Тепĕр кунне çывăрса тăрсанах çăпата туса ларакан атте патне пытăм та вăл ĕнер мĕншĕн макăрнине ыйтрăм. "Эсир пысăкланнăшăн савăнса", – терĕ çывăх çыннăм. Эпĕ, паллах, ун чухне пурне те ăнланайман.

Атте тепĕр куннех колхозра ĕçлеме пуçларĕ, ăна пĕрремĕш бригадăн бригадирне суйларĕç. Вăрçăран таврăннă салтаксем пирĕн пата каççерен килетчĕç, хĕрӳ çапăçусем çинчен калаçса ларатчĕç. Вĕсен йышĕнче – Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн икĕ хут кавалерĕсем Федор Ефимович Чалковпа Степан Михайлович Василевский, Мухтав тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсене тивĕçнĕ Сергей Максимович Максимов, икĕ вăрçăра пулнă Яков Иванович Волков, Яков Сергеевич Сергеев тата ыттисем.

Пурнăç урапи темшĕн-çке пурин те пĕр пек кусмасть. Тутаркасси урамĕнчи /халĕ Игнатьев урамĕ/ пурăнакан Алексей Ивановичăн вăрçă чарăнсан та савăнмаллиех пулмарĕ. Унăн çемйинче пилĕк ывăлпа пĕр хĕр çитĕннĕ. Ывăлĕсем пĕри те тăван тăрăха каялла таврăнайман. Вĕсем фронтран янă çырăвĕсем çемьери пĕртен-пĕр хĕр Клавдия Алексеевна килĕнче упранатчĕç. Вăл, Хуракасси шкулĕнче учительте ĕçлекенскер, кашни çулах Çĕнтерӳ кунĕнче пиччĕшĕсен тата ашшĕпе амăшĕн сăн ӳкерчĕкĕсене хăйĕн умне хуратчĕ, салтаксен виç кĕтеслĕ çырăвĕсене тепĕр хут уçса вулатчĕ. 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче Клавдия Алексеевна патне пиччĕшĕ Терентий çапла çырнă: "... Халĕ пире Украинăри Каменец-Подольск хулине куçарчĕç. Эпĕ полк госпиталĕнче ĕçлеме пуçларăм. Киле питĕ çитсе курас килет..." Шел, Терентин ĕмĕчĕ пурнăçланаймарĕ. Клавдия Алексеевна 8 çул каялла çут тĕнчерен уйрăлса кайрĕ. Фронтран килнĕ çырусем халĕ унăн аслă пиччĕшĕн Михаил Алексеевичăн мăнукĕсен килти архивĕнче упранаççĕ. Çапла, çемьери пĕр ывăл çеç çемье çавăрма ĕлкĕрнĕ, тепĕр тăваттăшĕ вара авланмасăрах пуç хунă.

Çав урамри Игнатий Николаевич Молековăн та виçĕ ывăлĕ – Иван, Алексей, Яков – вăрçăран таврăнайман. Алексей летчик пулнă, Яков Севастополь хулине хӳтĕленĕ чухне пуç хунă. 1942 çулхи нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕнче çырнă çыруран: "Салам Хĕрлĕ Çартан. Эпир кунта аванах пурăнатпăр. Нимĕçсене хăйсенчен туртса илнĕ пулеметсемпех хăвалатпăр. Маншăн ан кулянăр, хăвăр йĕркеллĕ пурăнăр. Эпĕ халех киле пыраймастăп, вăрçă пĕтсен тĕл пулăпăр..." Хуракасси вăтам шкулĕнче ирттернĕ халăх пухăвĕнче Владислав Михайлович Михайлов сĕннипе Тутаркасси урамĕн ятне улăштарма, çак паттăрсене асăнса Игнатьев урамĕ теме йышăннă.

■ **Рита МИХАЙЛОВА.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Хуракасси ялĕ

## Паттăрлăхĕ халăх асĕнче



● *Нина Капитонова /вăрçă умĕнхи сăн ӳкерчĕк/.*

***Вăхăт малаллах шăвать. Совет халăхĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 69 çул çитрĕ. Малашлăхшăн, ирĕклĕхшĕн пуç хунисем – мухтавлă, вĕсем вилĕмсĕр. Сталинград хулишĕн пынă хаяр çапăçусенче тăшмансемпе çапăçса çамрăклах пуç хунă тепĕр паттăр – Вăрмар районĕнчи Мăнçырмара ӳснĕ Нина Капитонова учительница.***

Нина Семеновна ялти шкула пĕтерсе 1940 çулта Канашри педучилищĕрен вĕренсе тухать, Чупайри тулли мар вăтам шкулта ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме тытăнать, çав вăхăтрах Шупашкарти пединститутра куçăнсăр майпа ăс пухать. Анчах та мирлĕ пурнăç нумая пымасть, çĕр-шыв çийĕн хăрушă хыпар сарăлать: «Фашистла Германи пирĕн çĕр-шыва сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнĕ». Ял çыннисем пĕрин хыççăн тепри фронта тухса каяççĕ. Çамрăк вĕрентекен те чăтса тăраймасть, 1942 çулхи çу уйăхĕнче хăй ирĕкĕпе вăрçа каять.

Нина – 62-мĕш çарăн стрелоксен 92-мĕш уйрăм бригадинчи 4-мĕш уйрăм батальонри санинструктор. Сталинград хулишĕн пынă хаяр çапăçусене хутшăнать. Çапăçусем кунран кун йывăрланса, хаярланса пынă, фашистсем пирĕн салтаксене кăнтăрла та, çĕрле те канăç паман, кунĕн-çĕрĕн тапăннă, вĕçĕ-хĕррисĕр вут-хĕм тăкнă. Моряксем атакăна кайсан Нина та вĕсенчен юлман: пăшал тытса пĕрре кăна мар çапăçăва кĕме тивнĕ унăн. Санинструктор вут-çулăм алхаснине пăхмасăр аманнă салтаксем патне çитсен вĕсен йывăр суранĕсене çыхнă, малтанхи пулăшу панă, хӳтлĕх вырăна илсе тухнă, медпункта çитернĕ. Унтан каллех санитар сумккине илсе малти линире çапăçу кĕрлекен çĕре аманнă моряксем патне васканă. Хăюллă санинструктор çапăçу хирĕнчен аманнă 160 салтака /хĕç-пăшалĕпе пĕрле/ илсе тухнă, тивĕçлĕ пулăшу парса вилĕмрен çăлса хăварнă. Вăрçăра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Нина Семеновна Капитоновăна Ленин орденĕпе наградăланă. 1943 çулта тан мар пĕр çапăçура 20 çулти Нина Капитонова вилмеллех аманать.

Ентешсем паттăра манмаççĕ. 1976 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче Мăнçырмари вăтам шкул умне пионерсемпе шкул ачисем, «Правда» колхоз ĕçченĕсем йышлăн пухăннă. Вĕсем Нина Капитонова ячĕллĕ автобуса кĕтсе илнĕ. Ăна тума Мăнçырмари пĕлӳ çуртĕнче вĕренекенсем 10 тонна тимĕр-тăмăр пухса панă, районти ытти мĕн пур шкул ачисене те çак ĕçе хастар хутшăнма, Аслă Çĕнтерӳ кунне тивĕçлипе кĕтсе илме чĕнсе каланă. Савăнăçлă митинга шкул директорĕ А.Соловьев уçнă. Нина çуралнă Мăнçырмара пĕр урам ун ячĕпе хисепленет. Г.Моклаковпа Н.Иванов композиторсем Нина Капитонова çинчен юрă хывнă.

■ **Галина МАТВЕЕВА.**
Вăрмар районĕ

—*Пресс-конференци*—

# Пурнăç лайăхланать, анчах ĕç вырăнĕсем çитмеççĕ

***ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ-ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов Пичет çуртĕнче республикăри МИХ представителĕсемпе пресс-конференци ирттерчĕ, 2003 çулта йышăннă «Чăваш Республикинчи ялăн 2013 çулчченхи социаллă аталанăвĕ» программа епле пурнăçланнипе паллаштарчĕ.***

Вун пĕр çул хушшинче ялăн социаллă инфратытăмне аталантарнипе, инженери хăтлăхĕ кӳрессин шайне çĕкленипе пĕрле пурнăç пахалăхне палăрмаллах лайăхлатнă. Çак тĕллевпе 97,2 млрд тенкĕ укçапа усă курнă. Мĕн пур çăл куçран кĕнĕ нухратпа 4,62 млн тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута янă. Çак тапхăрта патшалăх пулăшăвне пула ялта пурăнакан 19,8 пин çемье пурăнмалли кĕтес е хваттер ыйтăвне татса панă, çав шутра 6,2 çамрăк çемье тата çамрăк специалист.

Ялсене çут çанталăк газĕ кĕртес программăна 2005 çулхи çу уйăхĕнче пурнăçланă. 2003-2004 çулсенче газ сетьне 5666 çухрăма çити тăснă.

Республикăра ĕçмелли таса шыв ыйтăвĕн çивĕчлĕхĕ халĕ те чакмасть. 2005 çултанпа 75 ялта паха шывпа вырăнта тивĕçтерме 57 объект тунă. 124 ялта пурăнакан 82 пин ытла çын валли Кĕçĕн Çавал тата Хырла юхан шывĕсенче пысăк икĕ шыв управĕ хута янă. 2008 çулта Патăрьелпе Шăмăршă тата Комсомольски районĕсенче пурăнакан 62 пин çын валли пысăк объект тума тытăннă.

Чăваш Ен 2003-2013 çулсенче ялсенче шыв пăрăхĕсене вырнаçтарас енĕпе плана 182,3% тултарнă – Раççейри чи лайăх кăтарту ку. Анчах ыйту паянхи кун та татăлмасть-ха. 2013 çул вĕçленнĕ тĕле республикăра пурăнакансен 58,1 проценчĕ çеç таса шывпа усă курнă /Раççей Федерацийĕнче – 59,6%/.

2006-2011 çулсенче республикăра автотранспорт çӳрекен 863 çухрăм тăршшĕ çула çĕнĕрен тунă тата тĕпрен юсанă. 485 ял патне хытă сийлĕ çул пырать. 2003 çултанпа ку енĕпе 18,37 млрд тенкĕ тăкакланă.

Вун пĕр çул хушшинче 6 пин те 300 ача вырнаçмалăх ку чухнехи 27 шкул тунă, вăл шутра çиччĕшĕн валли федераци бюджетĕнчен субсиди уйăрнă. Хута янă 26 физкультура-спорт комплексĕнчен 21-шĕ яллă районсенче вырнаçнă. Спорт инфратытăмне çирĕплетме Патăрьелте, Йĕпреçре, Комсомольскинче стадионсем тунă.

2003 çултан тытăнса ЧР Ял хуçалăх министерстви программăна пурнăçлас тĕллевпе федераци бюджетĕнчен 1,4 млрд тенкĕлĕх субсиди илнĕ. Унпа ял çыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатма, инженери тата социаллă инфратытăма çирĕплетме, ял тăрăхĕсенче пĕр вырăнта комплекслă майпа çуртсем тума усă курнă.

Унччченхи программа хăйĕн тивĕçне туллин пурнăçланă май кăçалтан унăн ячĕ çĕнĕлле илтĕнет: «Чăваш Республикинчи ял территорийĕсен пĕр тикĕс аталанăвĕ», анчах тĕллевĕсем çавсемех юлнă. 2014 çулта ял тăрăхĕсенче çĕнĕ объектсем хута яма е тума тытăнмашкăн 1913,5 млн тенкĕ уйăрма палăртнă, çав шутра: федераци бюджетĕнчен – 414 млн, республика хыснинчен – 1499,5 млн тенкĕ.

Министр юлашкинчен журналистсен апат-çимĕç хакĕ ӳснипе, çанталăк епле пулассипе, мелиораципе, таса шывпа çыхăннă тата ытти ыйтăва та татăклăн хуравларĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

# Пенси фончĕ вăрçă ветеранĕсене пулăшать

***РФ Пенси фончĕ йĕркелесе тăракан «Ветерансем» кăтарту базин регион сегментĕнче пирĕн республикăри 41,7 пин ветеран çинчен пĕлтерни пур. Вĕсенчен 2,2 пинĕшĕ – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисем тата инваличĕсем, 25,6 пинĕшĕ – тыл ĕçченĕ.***

Çав информаципе Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисем тата тыл ĕçченĕсем патне Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе яракан Салама хатĕрленĕ тата ветерансен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатас тĕллевпе ятран социаллă пулăшу панă чухне усă кураççĕ.

Вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнисене икĕ пенси тӳлеççĕ, вĕсен сумми Чăваш Енре вăтамран 26,8 пин тенкĕпе танлашать. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисем тата инваличĕсем федераци çăмăллăхçи шутланаççĕ, çавна май уйăхри укçа тӳлевне /унта социаллă пулăшу пуххин хакĕ те кĕрет/ тивĕçеççĕ. Пенси фончĕ вăрçа хутшăннисене унсăр пуçне уйăхсерен 1-шер пин тенкĕ хушса парать. Çак хавхалантарăва Аслă Çĕнтерӳ 60 çул тултарнă май çирĕплетнĕ.

– Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисене патшалăх тивĕçлĕ пулăшу панине палăртма кăмăллă, – тенĕ РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ертӳçи Роза Кондратьева. – Хаклă ветерансене Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе ăшшăн саламласа ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей тата тăнăç пурнăç сунатпăр!

■ **В.ИЛЬИНА**

## Геннадий Михайлович ГРИГОРЬЕВА асăнса

2014 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче хаклă çыннăмăр, сывăх тăванăмăр Геннадий Михайлович Григорьев 56 çула кайса пурнăçран уйăрăлчĕ.

Геннадий Михайлович 1958 çулхи раштавăн 20-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Шупашкар районĕнчи Паçпак ялĕнче çуралнă. Апашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Байконур космодромра 30 çул ытла çар хĕсметĕнче тăнă.

Ырă кăмăллăх, уçă чунлăх, ыттисене пулăшма яланах хатĕр пулни, чун ăшши тата ытти ырă туртăм Геннадий Михайловича хисеп тата сум çĕнсе илме пулăшнă.

Геннадий Михайловичпа хутшăнма, ĕçлеме, пурăнма тивнисем унăн çутă сăнарне яланах асра тытĕç. Маттур çыннăмăр, ырă кăмăллă та ăслă юлташăмăр, ăш пиллĕ ывăлăмăр, аттемĕр, асаттемĕр ячĕ тăванĕсемпе çывăх çыннисен чĕринче упранĕ.

**Çывăх çыннисемпе тăванĕсем.**

# Хула стадионĕсенче чаплă уявсемччĕ...



***Архиври çак сăн ӳкерчĕке пăхатăп та тахçан-тахçан Шупашкарти «Энергия» стадионта Аслă Çĕнтерӳ кунне мĕнле уявланине аса илетĕп.***

Халăх лăк тулли! Репродукторсем хаваслă марш кĕввисене арена çийĕн салатаççĕ. Çĕнтерӳ уявĕпе пĕрлех çуллахи спорт сезонне уçнине те паллă тăваттăмăр. Тен, çавăнпа та стадионта спорт тумне тăхăннă çамрăксем ытларахчĕ. Чаплă парад вĕçленсен футбол уйне гимнастсемпе акробатсем тухатчĕç, çăмăл атлетсем вăрçă ветеранĕсен парнисемшĕн ăмăртма пуçлатчĕç, футболистсемпе волейболистсем вăййа пикенетчĕç. Сисмесĕрех хаваслă кун та иртсе каятчĕ. Чĕресенче çĕкленӳллĕ шухăш-кăмăл чĕртетчĕ. Мухтава тивĕçнĕ ветерансем пухăннисене, уява йĕркелекенсене тав туса стадионпа сыв пуллашатчĕç.

Çулсем иртсен, тăван хуламăрта çĕнĕ стадион туса лартсан çу уйăхĕн 9-мĕшĕнчи уяв унта куçнăччĕ. Татах та чаплăрах, сумлăрахчĕ вăл... Шел, ку вăхăт темшĕн малалла тăсăлмарĕ.

■ **Юрий ПЛОТНИКОВ,**
**ĕçпе спорт ветеранĕ**

***● В.Филипповпа М.Зефиров фронтовиксем тата паллă спортсменкăсем уяв ялавне йăтса тухаççĕ.***


Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
**реклама пĕлтерӳ**
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, песок. Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.Песок,** гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дешево. Д-ка. Т. 89033583021, 443021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём, навоз.** Дешево. Доставка. Т. 89276689713.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, **ТЕПЛИЦЫ,** навесы. Доставка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**28.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

**29.Керамблок, кирпич.** Т. 37-83-78.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент М-500.** Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 89613463834.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 89613463834.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 89033220479.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**79.Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**103.Керамблок, кирпич, кольца.** Качественные. Д-ка. Т. 21-36-80.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна**, железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки.Т. 89050281182.



**126.Теплицы** из поликарбоната: 3х4, 3х6, 3х8, 3х10 – в наличии. Доставка по ЧР. Т. 8/8352/ 48-08-23.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 89373913991.

**134.Кирпич, керамблок.** Заводские цены. Д-ка манипул. Т. 447353.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**224.Пчелосемьи, улья,** мёд, готовые **рамки.** Тел. 89003303090.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 89373918648, 89278535732.

**238.Бетон, керамблоки, радиаторы.** Доставка. Тел. 67-14-22.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**253.КВАДРОЦИКЛ** новый, бензиновый – 35000 руб. Т. 8-927-668-98-39.

**261.Песок, гравмассу, торф,** щебень, **чернозём.** Тел. 38-40-22.

**289.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 89033225766.

**294.Песок, гравмассу,** щебень, бой кирпича. **Услуги КамАЗа.** Тел. 89053419146.

**299.Грабли, косилки, ШПАГАТ.** Доставка! Тел. 8-937-388-50-89.

**304.ПОНИ.** Т. 89279988227.

**306.Пиломатериал** от производителя, **крепежные** изд., **утеплители, гидропароизоляция.** НДС. Доставка. Т.: 376-901, 440-447.

**307.Пчелосемьи "КАРПАТКИ".** Т. 89176534903.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## РАБОТА

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-937-952-58-67.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Т. 89170664146.


## *Саламлатпăр*



***Савнă мăшăрăма, юратнă аннене, хаклă асаннене, тăхлачăна, хаклă çыннăмăра – Елчĕк районĕнчи Шăмалак ялĕнче пурăнакан Полина Петровна ЛЬВОВĂНА – 60 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн тухакан чи ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Тĕнчери мĕн пур ыррине сунатпăр сана, хаклă çыннăмăр – юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек иксĕлми телей, çитĕнӳсемпе ăнăçусем. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ çывăх тăванусенчен ан татăлтăр.***

***Кун-çулу телейлĕ, вăрăм пултăр,***
***Ĕмĕр çулĕпе ут савăнса.***
***Пурнăç çийĕн сар хĕвел йăл култăр***
***Санăн кăмăлу пек шăранса.***

***Мăшăрĕ, виçĕ ывăлĕпе кинĕсем, мăнукĕсем, Горшковсем, Комиссаровсем, Ермаковсем, Углевсем, Меджидовсем, тăхлачисемпе хăтисем, çывăх тăванĕсем, кӳршĕ-арши.***









Администрация Азимсирминского сельского поселения Вурнарского района информирует о наличии свободного земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения, планируемого для предоставления на праве аренды:

сроком на 49 (сорок девять) лет:

- с кадастровым № 21:09:130301:666, площадью 303671 кв.м, расположенный по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос Азимсирминское, для сельскохозяйственного производства.

Заявки принимаются в течение месяца. Справки по тел. 62-3-11.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:000000:3775 площадью 117343 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Алманчиковское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: (83532)6-14-26.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:080301:256 площадью 41693 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Бикшикское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: (83532)6-14-26.


## УСЛУГИ

**32.Наркология. Живите трезво!** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** *Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**231.**Установка **заборов, ворот, свай** винтовых, **обшивка** сайдингом. Т. 299-788, 89176500640.

**250.Кровельные, фасадные работы**. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 8-903-322-04-79.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 89063816037.

**286.Бурение скважин** на воду до 90 м. Качество. Т. 89278625531.

**302.Бурение скважин на воду.** Опыт. Гарантия. Скидки. Т. 8-962-321-81-19, 21-81-19.


**«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче тухать.**


чăваш халăх хаçачĕ
**ХЫПАР**
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служби Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун” – 78353, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Сывлăх” – 11524, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор И.Н.КЛЕМЕНТЬЕВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă”** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8464. Заказ 1644.